Депутат сăмах илет

# Тавралăх илемĕшĕн хамăрах яваплă

***«Ĕçлесе тирпейлеме юрăхлă пĕтĕм япалана пуçтармалла тата ĕçе ямалла. Пурин те, çав шутра уйрăмшарăн кашнинех сиенленĕ тавралăха кашни кунах юсаса çĕнетме, этем ĕçĕ-хĕлĕ сиен кӳнĕ вырăнта пĕтсе ларнă илемлĕхе çĕнĕрен чĕртсе тăратма вĕренмелле».***
**(Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров республика Патшалăх Канашне янă Çыруран).**

Тăван çĕршыв, тăван тавралăх, тăван ял, тăван кил... Мĕн тери чуна çывăх, пысăк пĕлтерĕшлĕ çак сăмахсем. Анчах хаклама пĕлетпĕр-и-ха эпир çак пысăк пĕлтерĕшлĕ пуянлăха? Мĕнле упратпăр-ха эпир вĕсене? Паллах, кам мĕнле. Пурнăç улшăнса пынăçемĕн эпир хамăр та улшăнатпăр иккен. Анчах, шел пулин те, ытларахăшĕ этеме туса панă ырлăха шута хуманни юлашки вăхăтра уççăнах курăнма пуçларĕ. Ытларах эпир тăван кил çине кăна пăхма пуçларăмăр тесен те тĕрĕс пулать. Паллах, ку вăл япăх тесе каламастăп, анчах тăван кил тăван тавралăхсăр, тăван ялсăр мĕнле тытăнса тăма пултартăр-ха?

Малтанхи вăхăтра пулсан, ялсенче бригадирсем пурччĕ. Ял халăхĕн кулленхи пурнăçне вĕсем йĕркелесе пыратчĕç. Çуркуннехи шыв-шур иртсе кайсан çулсене юсаттаратчĕç, çырмасем çурса кайнă пулсан вĕсене те манмастчĕç вăхăтра юсаттарма. Мĕншĕн тесен пĕчĕк çурăкран тарăн çырма пулма пултарассине пĕлетчĕç. Ял çыннисем хăйсем те хăйсене хальхинчен сăпайлăрах тытатчĕç, кил таврашĕнчи тасамарлăха ăçта килчĕ унта кăларса пăрахма вăтанатчĕç. Кун пек тăвакансене ял халăхĕ намăслантаратчĕ.

Мĕн куратпăр-ха эпир паян? Кирек хăш яла çитсен те кунта пурăнакансем йĕркеллĕ, тăван тавралăха хисеплесе пурăнаççĕ теме май çук. Килте пуçтарăнакан тасамарлăха кам ăçта пĕлет унта кăларса пăрахать. Çырма-çатрасене кăна мар, çывăхри вăрмансене те варалама вăтанса тăмаççĕ. Теприсем тата йытă, кушак е килти пĕчĕкрех выльăхсен виллисене çывăхри юхан шывсене кайса пăрахма та именсе тăмаççĕ.

Ытларах ялсенче, кашни килте тенĕ пекех, артезиан шывĕ пур. Çак сăлтава пулах-и тен эпир вара ĕлĕкрен пире сиплĕ шывпа тăрантаракан çăлсемпе çăл куççене манăça кăлартăмăр. Нумай çĕрте çăлсем тавра лартнă вată йăмрасем ӳксе пĕтеççĕ, анчах çĕнĕрен лартас тесе шухăшлакансем сахалрах. Çăлĕсем тавра вара хупахпа вĕлтĕрен алхасать.

Мĕн патне кайса тухăпăр-ха кун пек пурăнсан? Ялсенче пурăнакансен пурнăçне камăн йĕркелемелле-ха тесен, ял старостин тенине илтме пулать. Кам-ха вăл паянхи ял старости? Тĕрĕссипе нихăш енĕпе те яваплă çын мар. Ял тăрăхĕсен ĕçченĕсем япăх мар шалу илеççĕ пулсан, ял старостисен пĕр пуссăрах халăхпа ĕçлемелле иккен. Нумай-и-ха паянхи пурнăçра чунĕсене парса пĕр тӳлевсĕр ĕçлекенсем? Ман шутпа, çукпа пĕрех. Мĕншĕн тесен миçе çул хушши ĕнтĕ пурнăçра укçана кăна хаклама вĕрентсе пыраççĕ. Старостăсем йĕркеллĕ ĕçленĕ пулсан, ялсенче çавăн чухлĕ киревсĕрлĕх пулмалла-и вара? Эпĕ кун пек каланăшăн йĕркеллĕ ĕçлесе пыракан старостăсем ман çине ан кӳренччĕр тетĕп.

Çак статьяна çырма эпĕ Çатракасси ялĕнче пурăнакансем район хаçачĕ çине çырнă хыççăн шутларăм. Вĕсем килти тасамарлăха ăçта хумалли пирки ыйту çĕклеççĕ. Эпĕ вара Çатракассисене çакăн пек ыйту парасшăн: «Ăçта хунă-ха вĕсене сирĕн килсенче 20–30 çул каялла?». Ман шутпа, йĕркеллĕ ял çыннин кил-çуртран илсе тухмалли нимĕнле тасамарлăх та çук. Пĕтĕм çĕрме пултараканнине тислĕк купи витĕр кăлармалла, çунаканнисене вара мунчара е прачка кăмакисенче усă курмалла. Тимĕр-тăмăра пĕр çĕре пуçтармалла та пухакансене памалла. Кантăк таврашĕ валли пахчара пĕр кĕтесре çур метр тарăнăш шăтăк чавмалла та çĕмĕрсе тултармалла, тулсан тăпрапа витсе хурса курăк ӳстермелле. Кирлĕ пулсан татах тепĕр шăтăк чавмалла. Кун пек тусан кантăк ванчăкĕсем нихăçан та никама та сиен кӳрес çук. Пирĕн килтен миçе çул хушши ĕнтĕ пĕр татăк çӳп-çап, тасамарлăх та тухмасть.

Тавралăха варалакансене вара май пур таран çирĕппрех ответ тыттармалла. Ку тĕлĕшпе ял тăрăхĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ е пачах та ĕçлемеççĕ. Çак киревсĕрлĕх тĕлĕшпе кирлĕ пек йĕрке тумасан çитес çулсенче хамăра ĕçме тăрă шывсăр юлас хăрушлăх та пур.

Кунпа пĕрлех ял урамĕсене тирпей-илем кĕртес ĕçре те çитменлĕхсем питĕ нумай. Нумайăшĕн килĕ умĕнче хăйăр, тислĕк е чул купи, ытти тасамарлăх сапаланса выртать. Ку тĕлĕшпе ял тăрăхĕсен хăйсен прависемпе усă курса тивĕçлĕ йĕрке тăвас пулать.

Юлашки вăхăтра колхозсемпе совхозсем саланнине пула çак хуçалăхсем хăй вăхăтĕнче тунă пĕвесемпе кӳлĕсем паянхи кун хуçасăр тăрса юлнисем пур. Вĕсене никам та пăхса тăмасть, кам мĕнле пĕлет, çавăн пек хуçаланать. Япăхса кайнă пĕвесем вара никама та кирлĕ мар. Анчах та вĕсене тума патшалăх, хуçалăх укçи-тенки сахал мар тăкакланнă вĕтха. Çакăн пек объектсене шута илсе районта йĕрке тăвасчĕ. Кунсăр пуçне кашни ял валлиех пĕвесенчен шыв илме автомашинăсемпе пыма майсем туса памалла. Инкек сиксе тухас пулсан кăна кун пирки шутламалла мар.

Тăван тавралăх, тăван ял илемĕ, унăн сăн-сăпачĕ хамăртанах килет. Кашни ял çынниех çавăн пирки шутласа пăхтăр, ăна варалакансене пурте сивлеччĕр. Кашни çын эпĕ тăван тавралăх, тăван ял пуянрах, илемлĕрех пултăр тесе мĕн турăм-ха, тесе шухăшласа пăхтăр. Ку вăл кашни ял çыннин тивĕçĕ пулса тăрать.

**П. ВОРОБЬЕВ,**
**депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ.**

Вĕрентӳ учрежденийĕсенче

# Пурне те савăнăç парнелерĕç

Нискасси шкулĕнче елка ирттернĕ чухне Яковлевсен çемйи пухăннисене савăнăçлă юмах парнелерĕ. Çемье пуçĕ Александр, унăн мăшăрĕ Люба тата вĕсен вунă çулхи хĕрĕ Маша



Çурçĕр Америка индеецĕсен тумĕсемпе тухса тăчĕç.

Вĕсем тухни пухăннисемшĕн чăннипех палăрăмлă самант пулчĕ. Пит-куçа сăрлассине те, утассин йăлисене те хăйсемех пăхса хунă. Вĕсен кĕпе-тумĕ кăна мĕне тăрать. Пурне те тыткăнлама пултарчĕç вĕсем: илĕртӳллĕ, чăнлăхпа çыхăнса тăраççĕ. Кĕпе-тумăн кашни пайĕ çӳлтен пуçласа аяла çитиччenех чăнлăхпа çыхăнса тăрать.

Çемье çак кĕпе-тумтире хатĕрлеме çулталăка яхăн вăхăт ирттернĕ. Тĕррисем кăна мĕн чухлĕ! Ашшĕ-амăшĕсем ĕçлеççĕ, хĕрĕ вара «5» паллăсемпе вĕренет. Чăнах та ĕнтĕ ялта пушă вăхăт сахалрах. Çапах та пĕр ĕмĕт-шухăшпа пĕрлешни, ыттисене савăнăç парнелессишĕн тăрăшни çулталăкĕпех вĕсене вăй-хал парса тăнă. Савăнăçĕ вара чăннипех те пурин валли те пулчĕ.

Кĕпе-тумтир вăл çур ĕç кăна. Яковлевсен çемйи хăйсен программипе пурне те асра юлмалла савăнтарма пултарчĕ. Чи авалхи варган (хомуза) музыка инструменчĕпе «Песни Гавайте» юррăн пĕр пайне юрласа пачĕç.

Елкăра илемлĕ тумсемпе савăнтаракансем сахал мар пулчĕç. Ку вара ашшĕ-амăшĕсен пултарулăхĕпе çыхăннă.

Шкулта ачасен ашшĕ-амăшĕсен комитечĕн членĕсен Вера Водяновапа Эльвира Иванова пуçарăвĕпе иртнĕ çул Çăварни уявне хаваслă лару-тăрура ирттернĕччĕ. Унта ашшĕ-амăшĕсем те активлă хутшăнчĕç. Катемпи те пулчĕ.

Эпир, шкулти педагогсемпе воспитательсем, пирĕн шкулта вĕренекенсен çакăн пек пултаруллă та хастар ашшĕ-амăшĕсем пулнăшăн чăннипех те савăнатпăр, ачасене савăнăç парнелекенсене тав сăмахĕ калатпăр.

**Маргарита ПУШКАРЕВА,**
**Нискасси шкулĕн воспитателĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Яковлевсен çемйи уяв вăхăтĕнче.**

Ĕçре пултаруллисем

# Çутă çăлтăр çутатакансем



Мăн Сĕнтĕр ялĕ пĕчĕк ял мар. Автобус чарăнăвĕ те унта иккĕ. Вăл вара пĕчĕк юхан шыв урлă каççанах пуçланать. Сылтăм енче унччен шкулăн спорт площадки вырнаçнăччĕ. Унта волейболла, баскетболла тата алă мечĕкĕпе (ручной мяч) ăмăртусем ирттернĕ. Çакă пĕтĕмпех пысăк мар лаптăкра пулнă. Унăн вăрăмăшĕ: 60 метртан ытла мар пулĕ, 100 метра çитместех. Çу кунĕсенче те, хĕллехи вăхăтра та кунта ăмăртусем тăтăшах иртнĕ.

Хальхи çĕнĕ шкулта вара спортзал çивитти айĕнче – курăнмасть те, илтĕнмест те. Кивĕ шкулăн коридорĕнче шкул ачисен рекорчĕсем пирки пĕлтерни çакăнса тăратчĕ. Йĕлтĕрпе чупассинчен тытăнса çăмăл атлетика таранах – 60 метра чупассинчен тытăнса (Петр Шигалев) шăчăпа çӳллĕшне сикессиччен (малтан – Алексей Жданов, кайран – Миша Гаврилов). Вĕсем – манăн тантăшсем, Сĕнтĕр шкулĕн 1970-мĕш çулĕсенчи спорт çăлтăрĕсем.

Сире çавна калама пултаратăп. Вăрçăчченхи 30-мĕш тата вăрçă хыççăнхи 50-мĕш çулсенче пирĕн шкулăн профилĕ пачах та спортпа çыхăнман. Кунта нумай çул хушши пултаруллă учитель, Чĕмпĕрти учительсен чăваш шкулĕн выпускникĕ Багров ĕçленĕ. Çавăн чухне шкулпа юнашар шкул сачĕ çĕкленнĕ. Шăпах çапла калатчĕç ăна, пахча е участок тесе те мар. Ĕçĕ акă мĕнре. Чĕмпĕр хулинче И.Я. Яковлев хăйĕн вĕренекенĕсене ланкастерски мелпе усă курса ĕçе хăнăхтарма тăрăшнă. Ун патĕнче çĕре юратассине, вăрлăхсене, сад тата пахча ĕçĕсене, пыл хурчĕсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине теорире тата практикăра вĕреннĕ.

Вĕллесем пулнине астумастăп. Анчах та Хрущев вăхăтĕнче шкул картишĕнче кроликсем пулнине пĕлетĕп. Шкулăн пысăк сачĕ вара Шокккăн тăвайккинчен симĕс айсберг пекех курăнатчĕ. Ку садра опытлă биолог Нина Михайловна Сапожникова хуçаланатчĕ. Вĕренекенсемпе кунта çимĕç йывăççисем айĕнчи тăпрана кăпкалатнă, çĕр çырлипе чие çырли пухнă, нимĕç пăрçипе фасоль çитĕнтернĕ. Ун чухне сад уйрăмах йĕркеллĕ шайра пулнă. Ĕçе, тăван çĕре юратма хăнăхтарасси те кунта килти, харпăр хăйĕн пахчинчи пек пулса пынă. Çак йăлана Мăн Сĕнтĕре паллă учительсем, И.Я. Яковлевăн вĕренекенĕсем пĕр мăшăр Багровсем илсе килнĕ.

Вĕсем пурнăçран уйрăлса кайнă хыççăн сад татах 25 çула яхăн, çĕнĕ шкул çуртне тăвичченех, хăйĕн типтерлĕхне çухатмарĕ. Кайран вара А. Чеховăн «Вишневый садĕнчи» пекех пулса тухрĕ. 90-мĕш çулсенчи хĕрӳ вăхăтсем çитрĕç.

Халĕ каллех спорт площадки патне таврăнар. 60-мĕш çулсем варринче, 70-мĕш тата 80-мĕш çулсенче кунта çĕре ятарласа таптаса хытарнă пекехчĕ. Нимĕнле çумăрпа та вăл ирĕлмен. Çиелтен ятарласа хытарса сарнă пекехчĕ вăл. Шкулта 1000 ачана яхăн вĕренетчĕ. Физкультура урокне харăсах икшер класс тухатчĕ. Арçын ачасемпе ытларах чухне Николай Антонович Кондратьев, хăш-пĕр чухне Илларий Васильевич Бочкарев занятисем ирттеретчĕç. Арçын ачасем хушшинче район шайĕнче кăна мар, республикăра та чемпионсем пулнă. Сăмахран, йĕлтĕрпе ăста чупнă Владимир Кольцова, Григорий Мозолина, Вячеслав Майкова, Евгений Желнина, Виталий Вазикова, Владимир Соколова кăна илер. Вĕсем шап-шурă спорт костюмĕсемпе ăмăртатчĕç.

Хĕр ачасене физкультурăпа Татьяна Яковлевна Петровская вĕрентетчĕ. Епле илемлĕ те хастар пулнă вĕсем! Татьяна Васильевна вĕсене вăй-халпа чăтăмлăха çеç мар, çыпăçулăхпа килĕшӳлĕхе те вĕрентнĕ. Çак енсем гимнастика урокĕсенче кăна çирĕпленсе юлман. Ăс-хакăл илемлĕхне çавăн пекех литература учителĕ Эльза Викторовна Харитонова, ют чĕлхесене вĕрентекенсем Калерия Федосьевна Верендеева тата Елизавета Петровна Соколова, хими учителĕсем Тамара Васильевна Толстова тата Александра Григорьевна Константинова та хăнăхтарнă. Кусем вĕсем эпĕ аса илнисем кăна. Илемлĕхе туйма рисовани учителĕ Валентина Константиновна Бочкарева та сахал мар вĕрентнĕ. Çакă пĕтĕмпех Владимир Андреевич Соколов директор, кайран вара Василий Алексеевич Верендеев ертсе пынипе пулса пынă.

Спорт сезонне яланах сентябрь уйăхĕнче уçнă. Алă мечĕкĕн вăйии енĕпе вĕренекенсем учительсемпе вăй виçетчĕç. Командăра кашни çулах Татьяна Яковлевна та пурччĕ. Енчен те арçын ачасем хăйсен тантăшĕсемшĕн пулнă пулсан, хĕр ачасем хăйсен физкультура учителĕшĕн çуннă.

Кайран пирĕн учительсем кăштах ватăлчĕç пулас. Унччени матч ирттересси те йăларан тухрĕ. Çак кунсенче вара педагогика ĕçĕн ветеранĕ Татьяна Яковлевна Петровская 75 çул тултарать. Ăна юбилей ячĕпе саламланă май ытти учительсене те тав сăмахĕ калас килет.

**Валерий ПЕТРОВСКИЙ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: манăн анне 19 çулта кăна.**

Ĕненекенсем валли

# Муркашра та шыва кĕрĕç

***Çулленех Иисус Христос Турă шыва кĕнин (Кăшарни) кунне халалласа Турра ĕненекенсем январĕн 18-мĕшĕнче шыва кĕреççĕ. Ку йĕрке, вăл мĕнле иртесси пирки эпир тĕплĕнрех Муркаш чиркĕвĕн настоятельне Федор аттене каласа пама ыйтрăмăр:***

– Малтанах çавна палăртса хăварнă пулăттăм. Унччени вăхăтра шыва кĕрессине Уйкас Янасал чиркĕвĕ тата Каршлăхри мăнастир çеç йĕркеленĕ пулнă. Кăçалтан тытăнса вара шыва кĕрессине Муркашра та йĕркелетпĕр. Шыва кĕмелли вырăна та палăртнă – «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ хыçĕнчи пĕве.

Çавна та палăртса хăварнă пулăттăм. Шыва кĕресси – йăла-йĕрке кăна мар. Вăл чун-чĕре тĕлĕшĕпе тасалассипе çыхăннă. Çавăнпа та шыва кĕнĕ çĕрте эрех таврашĕ ĕçме те, пирус туртма та юрамасть. Пурин те хăйсене сăпайлă та йĕркеллĕ тытмалла. Çыннăн ĕненӳ пулни кирлĕ. Çылăхсенчен, лайăх мар ĕçсенчен тасалас тесе шутламалла. Унсăрăн Турă çыннăн ыйтăвне тивĕçтерейместь. Шыва кĕнĕ чухне сăх сăхма та манмалла мар. Шыва виçĕ хутчен пуç таранах кĕрсе тухас пулать.

Январĕн 18-мĕшĕнчен тытăнса 7 кун хушши пур шыв та таса шутланать. Чиркӳри кĕл туса тасатнă шыв вара яланах таса. Шыва тасатмалли аслă кĕлĕ йĕркипе тасатсан кăна шыв яланах таса пулать.

Чиркӳсенче кĕлĕсем иртесси пирки те асăнса хăварнă пулăттăм. Муркашра кĕлĕ январĕн 18-мĕшĕнче 23 сехетре, Очăкассинче январĕн 19-мĕшĕнче 24 сехетре, Орининта январĕн 19-мĕшĕнче 8 сехетре, Уйкас Янасалта январĕн 18-мĕшĕнче 22 сехетре, Мăн Сĕнтĕрте январĕн 18-мĕшĕнче 15 сехетре тата январĕн 19-мĕшĕнче 8 сехетре, Мăн Хураçкара январĕн 18-мĕшĕнче 23 сехет те 30 минутра, Каршлăх мăнастирĕнче январĕн 18-мĕшĕнче 23 сехетре пуçланать.

Юлашкинчен çавна каласа хăварасшăн. Яланах Турăпа çывăх пулăр, ăна шанăр, ĕненĕр. Çитес кунсенче вара кĕлĕсенче пулса, шыва кĕрсе хăвăра тасалăх кӳрессi пирки те ан манăр.

**В. ШАПОШНИКОВ çырса илнĕ.**